28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
АВГУСТ
10
ЭРНЕКУН
153(6904) №

ЧӐВАШ КОММУНИ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Совет Правительстви Япони правительствине пӗлтерни

Августӑн 8-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Япони посолне Сато господина йышӑннӑ та ӑна Япони правительствине пӗлтермешкӗн Совет Правительстви ячӗпе ҫакӑн пек каласа панӑ:

«Гитлерла Германие аркатса тӑкса парӑнтарнӑ хыҫҫӑн вӑрҫа малалла тӑсса пыракан пӗртен-пӗр аслӑ держава Япони кӑна тӑрса юлчӗ. Виҫӗ держава — Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем, Великобритани тата Китай кӑҫалхи июлӗн 26-мӗшӗнче японецсен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене пӗр сӑмахсӑрах парӑнма хушнине Япони сирсе ячӗ. Ҫапла вара Япони правительстви Совет Союзне Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи вӑрҫӑ тӗлӗшпе посредник пулса тӑма сӗнни хӑйӗн вӑйне пӗтӗмӗшпех ҫухатать.

Япони парӑнма килӗшменнине шута илсе, союзниксем Совет Правительствине Япони агрессине хирӗҫ пыракан вӑрҫа хутшӑнма, ҫапла вара вӑрҫа пӗтерес срока кӗскетме, вӑрҫӑра вилекен халӑх хисепне сахаллатма, пӗтӗм тӗнчере хӑвӑртрах мирлӗ пурнӑҫ туса хума пулӑшмашкӑн чӗнсе каларӗҫ.

Совет Правительстви, союзник тивӗҫлӗхне тӳрӗ кӑмӑллӑн тытса пырса, союзниксем сӗннипе килӗшрӗ тата союзлӑ державӑсем кӑҫалхи июлӗн 26-мӗшӗнче тунӑ заявлени ҫумне пӗрлешрӗ.

Совет Правительстви ҫапла шутлать: унӑн ҫакӑн пек политики—мирлӗ пурнӑҫ туса хурассине ҫывхартмалли, халӑхсене малалла пӗтесрен тата хӗнхур курасран хӑтармалли, Германи пӗр сӑмахсӑр парӑнма хушнипе килӗшмен пирки тӳснӗ пек йывӑрлӑхсемпе ишӗлӳсем тӳсессинчен Япони халӑхне ҫӑлмалли пӗртен-пӗр май пулса тӑрать.

Малта асӑннине шута илсе, Совет Правительстви ҫапла пӗлтерет: ырантан пуҫласа, урӑхла каласан, августӑн 9-мӗшӗнчен пуҫласа, Совет Союзӗ хӑйне Японие хирӗҫ вӑрҫакан ҫӗршыв тесе шутлать.

1945 ҫулхи августӑн 8-мӗшӗ».

В. М. Молотов ҫавӑн пекех тата Сато господина ҫапла каланӑ: ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах Совет Союзӗн Токиори посолӗ Я. А. Малик Совет Правительствин ҫак заявленине Япони правительствине парать, тенӗ.

Япони посолӗ Сато господин Совет Правительствин заявленийӗ ҫинчен Япони правительствине пӗлтерме пулнӑ.

ЯПОНИ АГРЕССОРНЕ ҪАПСА АРКАТАТПӐР!

Совет Союзӗн Правительстви историллӗ пысӑк решени йышӑнчӗ. Паянтан пуҫласа Совет Союзӗ гитлерла Германие аркатса тӑкса парӑнтарнӑ хыҫҫӑн вӑрҫа малалла тӑсса пыракан пӗртен-пӗр державӑна—Японие хирӗҫ вӑрҫа тухрӗ.

Виҫӗ держава—Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем, Великобритани тата Китай 1945 ҫулхи июлӗн 26-мӗшӗнче Японин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене пӗр сӑмахсӑрах парӑнма хушнине Япони сирсе янӑ хыҫҫӑн Совет Правительствин ҫак утӑма ҫине тӑрсах тумалла пулса тӑчӗ. США-па Великобритани тата Китай хӑйсем чӗнсе каланинче ҫакӑн пирки асӑрхаттарнӑччӗ: Япони пӗр сӑмахсӑрах парӑнма килӗшмесен, ӑна хирӗҫ виҫӗ держава хӑйсен мӗнпур ҫар хӑватне вӑрҫа кӗртсе яраҫҫӗ, ҫакӑ вара «Японин мӗнпур хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкассине тата Япони ҫӗрне пӗтӗмӗшпех ишӗлтерсе пушатса хӑварассине пӗлтерет», тенӗччӗ. Япони, парӑнма килӗшмесӗр, хӑй Совет Союзне Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи вӑрҫӑ тӗлӗшпе посредник пулса тӑма сӗннине хӑех пӑрахӑҫа каларчӗ.

Японие парӑнма хушакан сӗнӗве Берлинра виҫӗ державӑн—ССР Союзӗн, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата Великобританин историллӗ конференцийӗ пынӑ вӑхӑтра панӑ пулнӑ. Япони правительстви ҫав сӗнӗве сирсе ячӗ. Япони правительствин позицийӗ—хӑйӗн захватчикла, вӑрӑ-хурахла планӗсене пӑрахман агрессорӑн позицийӗ пулса тӑрать. Япони Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи вӑрҫа ҫав планӗсене пурнӑҫа кӗртме пуҫласа янӑ та ӗнтӗ.

Японин нимӗнпе килӗшмен, сӗмсӗр позицийӗ кӗтмен ҫӗртен сиксе тухнӑ позици пулса тӑмасть, ҫакӑ вӑл Японие тытса пыракан ушкӑнсен яланхи политикипе сыхӑнса тӑрать.

Сталин юлташ 1936 ҫултах ҫапла кӑтартса панӑ: вӑрҫӑ тӑрушлӑхӗн икӗ вучахӗ пур, вӗсенчен пӗри Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче—Япони таврашӗнче, иккӗмӗшӗ вара—Германи таврашӗнче. Япони ун чухнех хӑй тӗнчери мире юратакан халӑхсене хирӗҫ агрессорсен каварлашуне хутшӑннӑ ҫӗршыв пулса тӑнине кӑтартса панӑ. Пуриншӗн те паллӑ, 1936 ҫулхи ноябрӗн 25-мӗшӗнче Япони мире юратакан державӑсене хирӗҫ Германипе союз турӗ, ҫав союз вара «коминтерна хирӗҫле пакт» ятлӑ пулса тӑчӗ. Кайрантарах ҫав икӗ енлӗ килӗшӳрен агрессорсем виҫӗ енлӗ пакт туса хучӗҫ. Ҫапла вара ун чухне агрессорсен блокне туса хунӑ, демократиллӗ ҫӗршывсене хирӗҫ каварлашу организациленӗ. Германи империализмӗпе Япони империализмӗ хӑйсен планӗсенче пӗтӗм тӗнчене хӑйсем хушшинче пайланӑ, ҫав ӗмӗтпе вӗсем тӗнче вӑрҫине пуҫласа янӑ.

Сталин юлташ партин XVIII-мӗш съездӗнче ҫапла каланӑ: «Анчах вӑрҫа ӳкӗте кӗртме ҫук. Ӑна нимӗнле пӗркенчӗксемпе те витсе пытарма ҫук. Мӗншӗн тесен, ҫак вӑхӑт хушшинче Япони—Китайӑн питех те пысӑк территорине, Итали—Абиссинине, Германи—Австрие тата Судет облаҫне, Германипе Итали иккӗшӗ пӗрле—Испание туртса илнӗ факта, —ҫаксем пурте вӗсем агрессиллӗ мар государствӑсен интересӗсене хирӗҫ пулса пынӑ ӗҫсем,—ҫак факта ӗнтӗ нимӗнле «тӗнӗлсемпе», «виҫкӗтеслӗхсемпе» тата «коминтерна хирӗҫле пактсемпе» те пытарса тӑма май ҫук. Вӑрҫӑ—вӑрҫах пулса юлать, агрессорсен вӑрҫӑллӑ блокӗ—вӑрҫӑллӑ блоках, агрессорсем вара—агрессорсемех пулса юлаҫҫӗ».

Гитлерла йытӑ-кӗтӗвӗсем Совет Союзне килсе тапӑнсан, Япони Гитлерла Германин союзникӗ пулса тӑнине пӗтӗмӗшпех кӑтартса пачӗ. Япони империализмӗ хӑйӗн политикине гитлерла Германи Совет Союзне тата унӑн союзникӗсене ҫӗнтерессине шанса тытса пынӑ. Японири влаҫа тытса тӑракан ушкӑнсем, Германи агрессорне пулӑшса, хӑйсен хапсӑнчӑк сӗмсӗр планӗсене хӑвӑртрах та туллинрех пурнӑҫа кӗртме ӗмӗтленнӗ. 1941 ҫулхи декабрӗн 8-мӗшӗнче, Японин тинӗс-ҫар тата сывлӑш-ҫар вӑйӗсем Америкӑпа Англин Лӑпкӑ океан ҫинчи владенийӗсем ҫине кӗтмен ҫӗртен пырса тапӑннӑ чухне, Япони агрессорӗ, Германи агрессорӗ пекех, ултавлӑн та ирсӗррӗн, кашкӑрла хӑтланнӑ. Ҫав вӑрӑ-хурахла ӗҫре Япони империализмӗн яланхи мелӗсем курӑнса кайрӗҫ. Пуриншӗн те ҫакӑ паллӑ-ҫке ха: Япони империалисчӗсем Китайри вӑрҫа пӗр асӑрхаттармасӑрах пуҫласа ячӗҫ, ҫав вӑрҫа Япони хаҫачӗсем, мӑшкӑлланӑ пек, «инцидент» тесе кӑтартса пама пӑхрӗҫ. Ҫавӑн пекех, 40 ҫул ытла ӗлӗкрех Япони вӑрҫӑ пуҫласси ҫинчен официальнӑй йӗркепе пӗлтериччен Росси ҫине кӗтмен ҫӗртен тапӑннӑ. Ҫакӑ та паллӑ: Япони ҫарӗсем, пӗтӗм тӗнчери мӗнпур ҫирӗпленнӗ нормӑсене пӑсса, 1918 ҫулта Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче Совет ҫӗршывӗн ҫӗрӗссе туртса илчӗҫ, пирӗн Николаевск тата ытти хуласемпе ялсенчи мирлӗ халӑха тискер кайӑкла вӗлерсе пычӗҫ.

Лӑпкӑ океан ҫинче вӑрҫӑ пуҫласа ярса, Япони империалисчӗсем, Германи вӑрӑ-хурахӗсем пекех, кӗтмен ҫӗртен тапӑнни ӑнӑҫлӑ пулассине шанса тӑнӑ. Ҫакӑ вӑл агрессорсем пӗр-пӗринпе килӗштерсе тунӑ тактика пулнӑ. Японипе Германи вӑрҫӑра пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси гитлерла Германие хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑн мӗнпур тапхӑрӗнче, Германие ҫапса аркатса парӑнтаричченех, тӑсӑлса пычӗ. Японири «Ниппон таймс» хаҫат 1944 ҫулхи декабрьте уҫҫӑнах ҫапла ҫырнӑ: «Японипе Германие хӗҫпӑшал тытма хушнӑ тӗп тӗллевсем икӗ ҫӗршывӗн те пӗр пекех пулса тӑраҫҫӗ», тенӗ. Ҫав хаҫат ҫакна палӑртнӑ: «Икӗ союзник вӑрҫӑра пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлени, хӑйсен вӑрҫӑ ӗҫӗсене пӗр-пӗринпе сыхӑнтарса пынине пула, ҫав тери пысӑк усӑ пачӗ», тенӗ.

Совет Союзӗпе Япони хушшинче нейтралитет пирки тунӑ килӗшӗве пӑрахӑҫа кӑларасси ҫинчен Совет Правительстви 1945 ҫулхи апрелӗн 5-мӗшӗнче тунӑ заявленипе ҫапла кӑтартса панӑччӗ: «Япони, Германин союзници, Германие ССР Союзне хирӗҫ вӑрҫма пулӑшать. Кунсӑр пуҫне, Япони США-па Англие хирӗҫ, Совет Союзӗн союзникӗсем пулса тӑраканскерсене хирӗҫ, вӑрҫать», тенӗччӗ.

Япони империалисчӗсен сӗмсӗр ӗмӗчӗсем, хӑйсен Германи союзникӗсенни пекех, путланса ларчӗҫ. Гитлерла Германие хирӗҫ пыракан тӗрӗс вӑрҫӑра агрессорсен каварлашуне хирӗҫ аслӑ союзниксен хӑватлӑ коалицийӗ ӳссе ҫитӗнчӗ. Гитлера хирӗҫле коалици хӑй умне пархатарлӑ та таса задача—халӑхсене фашистла агрессирен хӑтарас задача лартрӗ. ССР Союзӗпе Великобритани тата США-н кӗрешӳри союзӗ хӑй тавра ирӗклӗхе юратакан мӗнпур халӑхсене пухса пӗтӗҫтерчӗ. Тӗп агрессора хирӗҫ, гитлерла Германие хирӗҫ пыракан кӗрешӳре геройла Хӗрлӗ Ҫар ӗмӗрлӗхе чапа тухрӗ. Хӗрлӗ Ҫарпа пирӗн союзниксен паттӑр ҫарӗсем пыра-пыра ҫапнипе Гитлерӑн Европӑри блокӗ ишӗлсе анчӗ, агрессорсен ирсӗр «тӗнӗлӗ» арканса кайрӗ, гитлерла Германи ҫумӗнчен унӑн мӗнпур союзникӗсемпе тарҫисем хӑйпӑна-хӑйпӑна ӳкрӗҫ. Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче кӑна Япони агрессорӗ хӑйӗн усал ӗҫне туса пынӑ тата халӗ те туса пырать-ха, вӑл тӗнчери халӑхсене инкек-синкек кӳрекен вӑрҫа малалла тӑсса пырать.

Хӗрлӗ Ҫарпа пирӗн союзниксен ҫарӗсем пӗрле вӑй хурса кӗрешнипе пула гитлерла Германие чӗркуҫҫи ҫине тӑратнӑ. Анчах ҫак урок Япони агрессорӗшӗн ҫителӗксӗр пулнӑ иккен. Ирӗклӗхе юратакан аслӑ халӑхсене таччӑн пӗтӗҫтерекен союзлӑ вӑя Япони агрессорӗ куҫкӗретӗнех хакламасӑр тӑнӑ.

Халӗ Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче Япони агрессийӗн вучахне хӑвӑртрах пӗтерсе лартас ыйту хӑйӗн пӗтӗм ҫивӗччӗшӗпе тухса тӑчӗ. Япони парӑнма килӗшменнине кура, союзниксем Совет Правительствине Япони агрессине хирӗҫ пыракан вӑрҫа хутшӑнма, ҫапла вара вӑрҫа пӗтерес срока кӗскетме, вӑрҫӑра вилекен халӑх хисепне сахаллатма, пӗтӗм тӗнчере хӑвӑртрах мирлӗ пурнӑҫ туса хума пулӑшмашкӑн чӗнчӗҫ. Совет Правительстви, союзник тивӗҫлӗхне тӳрӗ кӑмӑллӑн тытса пырса, ҫав чӗнӗве йышӑнчӗ. Вӑл союзлӑ державӑсем кӑҫалхи июлӗн 26-мӗшӗнче тунӑ заявлени ҫумне пӗрлешрӗ.

Пӗр сӑмахсӑрах парӑнма хушнине сирсе ярса, Япони империализмӗ пӗтӗм тӗнчене ҫакна кӑтартса пачӗ: вӑл чӑн-чӑн лару-тӑрӑва ӑнланса илме пултараймасть, Японири влаҫа тытса тӑракан ушкӑнсем Япони халӑхӗн интересӗсене ним вырӑнне те хумаҫҫӗ, хӑйсен ҫӗршывне вӗҫӗ-хӗррисӗр инкексемпе ҫухатусем кӳреҫҫӗ, Япони валли гитлерла Германин шӑпинех хатӗрлеҫҫӗ. Ыйтӑва мирлӗ татса пама нихӑш енчен те май паман ҫак условисене кура, Совет Правительстви августӑн 9-мӗшӗнчен пуҫласа Совет Союзӗ хӑйне Японие хирӗҫ вӑрҫакан ҫӗршыв тесе шутлама йышӑнчӗ. Совет Правительстви пӗлтернинче ҫапла каланӑ: «Унӑн ҫакӑн пек политики мирлӗ пурнӑҫ туса хурассине ҫывхартмалли, халӑхсене малалла пӗтесрен тата хӗнхур курасран хӑтармалли, Германи пӗр сӑмахсӑр парӑнма хушнипе килӗшмен пирки тӳснӗ пек мӗнпур йывӑрлӑхсемпе ишӗлӳсенчен Япони халӑхне хӑтармалли пӗртен-пӗр май пулса тӑрать».

Совет Правительствин В. М. Молотов юлташ пӗлтернӗ историллӗ заявленийӗ ҫакна кӑтартса парать: аслӑ Совет ҫӗршывӗ халӑхсем хушшинчи миршӗн кӗрешмелли сталинла политикӑна пӗр вӗҫӗмрен, ҫине тӑрса пурнӑҫа кӗртсе пырать. Германи империализмне хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешсе, совет халӑхӗ хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне тата ирӗклӗхне хӳтӗлесе хӑварчӗ, Европӑри цивилизацие фашистла аркатуҫӑсенчен ҫӑлса хӑварчӗ. Халӗ совет халӑхӗ умӗнче историллӗ ҫӗнӗ задача — мӗнпур этемлӗх интересӗсемшӗн вӑрҫа хӑвӑртрах пӗтерес тата пӗтӗм тӗнчери мире юсаса йӗркелес шутпа, хамӑрӑн союзниксемпе пӗрле пулса, империалистла Японие ҫапса аркатас задача тӑрать. Социализмлӑ Тӑван ҫӗршыв интересӗсемшӗн, ирӗклӗхе юратакан мӗнпур халӑхсен интересӗсемшӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешекен хамӑр Правительствӑн аслӑ решенине совет халӑхӗ пӗтӗмӗшпех ырлать.

Генийлӗ полководец, совет халӑхӗн ҫулпуҫӗ, Генералиссимус И. В. Сталин ертсе пынипе, совет халӑхӗ тата кӗрешӳре чапа тухнӑ Хӗрлӗ Ҫар Тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗҫ! Япони агрессорне ҫапса аркататпӑр!

(«Правда», августӑн 9-мӗшӗнчи умстатья).

В. М. Молотов юлташ Великобритани, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата Китай посолӗсене пӗлтерни

Августӑн 8-мӗшӗнче В. М. Молотов Великобритани посолне Арчибальд К. Керра, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен посолне В. А. Гарриман господина тата Китай посолне Фу Бин-Чан господина йышӑннӑ та Совет Правительстви августӑн 9-мӗшӗнчен пуҫласа Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫа тухасси ҫинчен йышӑннӑ решение пӗлтернӗ.

Посолсем Совет Правительствин заявленийӗпе кӑмӑллӑ пулни ҫинчен пӗлтернӗ.

И. В. Сталин Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен посолне В. А. Гарриман господина йышӑнни

Августӑн 8-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ Генералиссимус И. В. Сталин Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен посолне В. А. Гарриман господина йышӑннӑ.

Йышӑнура СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов тата посольство советникӗ Д. Кеннан пулнӑ.

В. М. Молотов Ван Ши-Цзе господинпа калаҫни

Августӑн 8-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Китай республикин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗпе Ван Ши-Цзе господинпа калаҫнӑ.

СССР ЮТ ҪӖРШЫВ ӖҪӖСЕН ХАЛӐХ КОМИССАРИАТӖНЧЕ ПУЛНӐ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ

Августӑн 8-мӗшӗнче каҫхине СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариатӗнче пресс-конференци пулса иртнӗ. Пресс-конференципе Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов совет тата ют ҫӗршыв хаҫат представителӗсене Совет Правительстви Японин ССР Союзӗнчи посолне Сато господина августӑн 8-мӗшӗнче панӑ заявленипе паллаштарнӑ.

Молотов ҫапла пӗлтернӗ: Совет Правительствин заявленине Япони посолне панӑ хыҫҫӑн, эпӗ ун ҫинчен Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Великобританин Посолӗсене пӗлтертӗм. В. М. Молотов юлташ журналистсем панӑ ыйтусем ҫине ответсем панӑ.

Англире тухакан «Таймс» хаҫат корреспонденчӗ Паркер господин японецсем Совет Правительствинчен хӑйсен посредникӗ пулма хӑҫан ыйтнӑ, тенине хирӗҫ, В. М. Молотов ҫапла каланӑ: ку сӗнӗве кӑҫалхи июлӗн варри тӗлӗнче илнӗ, тенӗ. Берлинри конференци вӑхӑтӗнче ку сӗнӳ ҫинчен Трумэн президента, Черчилль господинпа Эттли господина тӗплӗн каласа панӑ, тенӗ В. М. Молотов.

«Таймс» журнал корреспонденчӗ Томпсон господин: посредник пуласси ҫинчен панӑ сӗнӗве кам тата хӑҫан панӑ, тесе ыйтнӑ. В. М. Молотов ҫапла ответ панӑ: ку сӗнӳ ҫинчен Япони императорӗ ятлӑ специальнӑй посланире каланӑ. Ҫав сӗнӗве Япони посолӗ Сато господин июлӗн варри тӗлӗнче Совет Правительствине панӑ.

Американецсен Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчӗ Гильмор господин ҫапла ыйтнӑ: ССР Союзӗпе Япони хушшинчи вӑрҫӑ ӗҫӗсем ҫурҫӗр иртсенех пуҫланаҫҫӗ-и? В. М. Молотов ку ыйтӑва хирӗҫ: ҫурҫӗр иртсенех пуҫланаҫҫӗ, тесе ответ панӑ.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчӗ Хандлер господин: Сато господин хӑҫан тата мӗнле майпа ССР Союзӗнчен тухса кайӗ, тесе ыйтнӑ. В. М. Молотов ҫапла ответ панӑ: Япони посолӗ Японие тухса каясси Совет Союзӗн Японири посолӗ ССР Союзне таврӑннинчен килет. Ку тӗлӗшпе эпир халех тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнӑпӑр.

Малалла Паркер господин ҫапла ыйтнӑ: Совет Союзӗпе Китай хушшинчи сыхӑнусем ҫинчен договор тӑвас темеҫҫӗ-и? В. М. Молотов ҫапла ответ панӑ: ку ыйтӑва халӗ Мускавра пурӑнакан Китай представителӗсемпе пӗрле сӳтсе яваҫҫӗ. Молотов юлташ Китайпа договор тӑвассине шантарса каланӑ.

Япони агрессорне—вилӗм!

Совет правительстви Японие хирӗҫ вӑрҫа тухни ҫинчен пӗлтернӗ хыпар республикӑри хуласемпе ялсем тӑрӑх хӑвӑрт сарӑлчӗ.

Ҫак хыпара илтнӗ хыҫҫӑн Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче ӗҫлекенсем митингсене пухӑнчӗҫ. Ягунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводри рабочисен митингӗ кӑнтӑрлахи апат вӑхӑтӗнче пулса иртрӗ.

Совет Правительствин пӗлтерӗвӗ ҫинчен ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн заводри парторгӗ В. Борох юлташ каласа пачӗ. Ун хыҫҫӑн темиҫе сын тухса каларӗҫ. Пӗр цех начальникӗн заместителӗ Осаченко юлташ ҫапла каларӗ:

— Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар, союзниксен ҫарӗсемпе пӗрле, фашизмӑн йӑвине—гитлерла Германие тӗппипех тустарса тӑкрӗ. Ун хыҫҫӑн тӗнчери мирлӗ пурнӑҫа пӑсакан пӗртен-пӗр ҫӗршыв — Япони юлчӗ. Халӗ ӗнтӗ Японие вӑрҫӑра парӑнтармалли черет ҫитрӗ. Аслӑ союзниксемпе пӗрле, Японие хирӗҫ пирӗн Совет Союзӗ те вӑрҫа тухрӗ. Иккӗленӳ ҫук: ҫак татӑклӑ вӑрҫӑра Япони те парӑнӗ. Вара ҫӗр ҫинче Берлинри конференципе палӑртса хӑварнӑ пек мирлӗ пурнӑҫ пуҫланӗ.

Митингра производство начальникӗн заместителӗ Буйволов, комсомолец Алексеев, стахановка Кац юлташсем те тухса каларӗҫ.

— Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем,— терӗ комсомолец Алексеев юлташ,—каллех хӗрӳ ҫапӑҫӑва кӗчӗҫ. Вӗсем Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче тунӑ кашни ҫӗнтерӳ ҫине эпир кунта стахановла ӗҫпе ответлер. Пирӗн тухӑҫлӑ ӗҫ Япони агрессорне хӑвӑртрах аркатса тӑкма пулӑшӗ!

Митингра пулнисем Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫа тухнине ырласа резолюци йышӑнчӗҫ.

Ҫар сыннисен ҫемьисене пулӑшатпӑр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Алманч ял Советне кӗрекен «12 лет Октября» колхоз ҫартан киле таврӑнакан паттӑр воинсене тата ҫар сыннисен ҫемьисене пулӑшас ӗҫе тимлӗн туса пырать.

Колхоз сӗнтерӳҫӗсене Трак разъездӗнчен киле илсе ҫитерме чи лайӑх ӑйӑра уйӑрнӑ. Воинсене киле таврӑнсан пулӑшма пулӑ тата ытти апат-ҫимӗҫ хатӗрлесе хунӑ.

Колхоз ҫар сыннисен ҫемьисене пулӑшас енӗпе те тӑрӑшса ӗҫлет. Коммунистсен пухӑвӗнче сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн ҫар сыннисен ҫемьисене пулӑшас ӗҫ татах та лайӑхланчӗ. Марфа Матвеева колхозницӑна пӳрт лартма 10 пӑт тырӑ панӑ. Фронтовик арӑмне Александра Васильева юлташа колхоз пӳрт лартса пама йышӑннӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 9-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче Совет ҫарӗсем унти вӑхӑтпа августӑн 9-мӗшӗнче ирхине тинӗс тӑрӑхӗнче, ХАБАРОВСК районӗнче тата БАЙКАЛ леш енче Маньчжури чиккисем урлӑ анлӑ фронтпа каҫса кайнӑ.

Тинӗс тӑрӑхӗнче пирӗн ҫарсем, тӑшман вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, японецсен тимӗрпе бетонран тунӑ хӳтӗленмелли вырӑнне татса кӗнӗ те августӑн 9-мӗшӗнче пӗр кун хушшинче 15 километра ҫити малалла кайнӑ.

ХАБАРОВСК районӗнче пирӗн ҫарсем чылай вырӑнсенче ҫапӑҫса АМУР тата УССУРИ шывӗсем урлӑ каҫнӑ, ҫавӑн чухне ФУЮАНЬ хулине тата халӑх пурӑнакан ытти темиҫе пункта туртса илнӗ.

Байкал леш енче пирӗн ҫарсем, тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, японецсен МАНЬЧЖУРИЯ тата ЧЖАЛАЙНУР хулисем патӗнчи тӗреклетнӗ районне штурмласа тытса илнӗ, Маньчжурия тата Чжалайнур хулисемпе чугун ҫул станцийӗсене туртса илнӗ. БУИР-НУР кӳлли районӗнче пирӗн ҫарсем ДЖИНДЖИН СУМЭ тата ХОШУ СУМЭ ятлӑ пысӑк ялсене йышӑннӑ, унта тӑшман питех хирӗҫ тӑман.

Пӗтӗмӗшпе илсен, августӑн 9-мӗшӗнче пӗр кун хушшинче пирӗн ҫарсем 15 километртан пуҫласа 22 километр таран малалла кайнӑ.

Пирӗн авиаци Маньчжурири пысӑк чугун ҫул узелӗсене—ХАРБИН, ЧАНЧУНЬ, ГИРИН хулисене тата СЕЙСИН, РАСИН порчӗсене пыра-пыра ҫапнӑ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Китай республикин ӗҫ тӑвакан Юань председателӗ Сун Цзы-Вень господин тата Китай республикин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен министрӗ Ван Ши-Цзе господин Мускава килни

Августӑн 7-мӗшӗнче Мускава Китай республикин ӗҫ тӑвакан Юань председателӗ Сун Цзы-Вень господин каллех килнӗ, ҫавӑн пекех тата Китай республикин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Ван Ши-Цзе господин килнӗ. Вӗсемпе пӗрле Сюнь Ши-Хой генерал, Ше Хун-Ле адмирал, Сань Чан-Чжао господин, Цзян Цзин-Го господин, Чжан Фу-Юнь господин, Цу Да-Мин господин, Лю Кай господин, Лю Цзе-Жун господин тата ыттисем те килнӗ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах Мускава Совет Союзӗн Китайри посолӗ А. А. Петров килнӗ.

Центральнӑй аэродромра вӗсене ҫаксем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ: СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗ Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов, СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ С. А. Лозовский, Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Д. Крутиков, Мускав Совет Председателӗн Заместителӗ М. Я. Яснов, К. Р. Синилов генерал-лейтенант, СССР Наркоминделӗн Протокол отделӗн заведующийӗ Ф. Ф. Молочков, СССР Наркоминделӗн Инҫетри Хӗвелтухӑҫ пӗрремӗш отделӗн заведующийӗ Г. И. Тункин.

Ҫавӑн пекех тата вӗсене ҫаксем кӗтсе илнӗ: Фу Бин-Чан господин пуҫ пулса тӑракан Китай посольствин йышӗ, Великобритани посолӗ сэр Арчибальд Керр, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен посолӗ А. Гарриман господин, Франци республикин посолӗ генерал Ж. Катру тата ыттисем те.

Аэродрома Китай тата Совет флагӗсемпе илемлетнӗ.

И. В. Сталин Сун Цзы-Вень господинпа калаҫни

Августӑн 7-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Китай республикин наци правительствин ӗҫ тӑвакан Юань председателӗпе Сун Цзы-Вень господинпа калаҫнӑ.

Калаҫура ҫаксем пулнӑ: СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов, СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ С. А. Лозовский, Совет Союзӗн Китайри посолӗ А. А. Петров, ҫавӑн пекех тата Китай республикин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ Ван Ши-Цзе, Китай республикин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Вице-министрӗ Виктор Ху господин, Китайӑн Совет Союзӗнчи посолӗ Фу Бин-Чан господин тата делегаци членӗ Цзян Цзин-Го господин пулнӑ.

Польша республики Халӑх Совечӗн президенчӗ Б. Берут господинпа Польша республики Халӑх пӗрлӗхӗн вӑхӑтлӑх правительствин премьер-министрӗ Осубка-Моравский господин Мускава килни

Августӑн 8-мӗшӗнче Мускава Польша республики Халӑх Совечӗн Президенчӗ Б. Берут господин, Польша республики Халӑх пӗрлӗхӗн вӑхӑтлӑх правительствин премьер-министрӗ Э. Осубка-Моравский господин, премьер-министрӑн заместителӗ, ҫӗрӗҫ министрӗ С. Миколайчик господин, промышленность министрӗ Г. Минц господин, ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗн заместителӗ З. Модзелевский господин, промышленность министрӗн заместителӗ Г. Ружаньский господин тата ыттисем те килнӗ.

Вӗсемпе пӗр вӑхӑтрах Мускава Совет Союзӗн Польшӑри посолӗ В. З. Лебедев килнӗ.

Белорусси вокзалӗнче Б. Берут, Э. Осубка-Моравский, С. Миколайчик, Г. Минц, З. Модзелевский, Г. Ружаньский господинсемпе ыттисене ҫаксем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ: СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗ Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов, Оборона Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ Н. А. Булганин, СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский, Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Д. Крутиков, Мускав Совет Председателӗн Заместителӗ М. Я. Яснов, Мускав хула коменданчӗ Синилов генерал-лейтенант, СССР Наркоминделӗн протокол отделӗн Заведующийӗ Ф. Ф. Молочков, СССР Наркоминделӗн 4-мӗш Европа отделӗн Заведующийӗ Н. А. Абрамов тата ыттисем те.

Килнисене ҫавӑн пекех тата ҫаксем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ: Польша ӗҫӗсен вӑхӑтлӑх повереннӑйӗ В. Матвин господин пуҫ пулса ертсе пыракан Польша посольствин йышӗ, Великобритани посолӗ сэр Арчибальд Керр, Китай республикин посолӗ Фу Бин-Чан господин, Греци посолӗ А. Поли господин, Нидерланди посолӗ барон Каспар ван Бруголь Дуглас, Бельги посолӗ Э. Ле Гэ господин, Франци республикин посолӗ Ж. Катру генерал, Югослави посолӗ В. Попович господин, Эфиопи посланникӗ Л. Таэзас господин, Швеци посланникӗ С. Себерлюм господин, Люксембург посланникӗ Р. Блюм господин, Дани посланникӗ Т. Дессинг господин, Болгари представителӗ Д. Михалчев господин, Чехословаки республики ӗҫӗсен вӑхӑтлӑх повереннӑйӗ Я. Гниздо господин, Норвеги ӗҫӗсен вӑхӑтлӑх повереннӑйӗ Э. Крог-Хансен господин, Исланди ӗҫӗсен вӑхӑтлӑх повереннӑйӗ Д. Торетейнссон господин, Великобритани посольствин советникӗ Ф. Робертс господин, Иран посольствин советникӗ А. Этэсами господин, Итали посольствин пӗрремӗш секретарӗ Д. Мессери господин тата ыттисем те.

Хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ чухне хисеплӗ хурал тӑратнӑ тата Польша республикипе Совет Союзӗн государство гимнӗсене каланӑ.

Вокзала Польша тата Совет флагӗсемпе илемлетнӗ.

Совет Правительстви Румынипе дипломатиллӗ сыхӑну тытма пуҫласси ҫинчен йышӑннӑ решени пирки Румыни Правительстви тунӑ заявлени

Совет Правительстви Румынипе дипломатиллӗ сыхӑну тытма пуҫласси ҫинчен йышӑннине пӗлтерсен, Румынин вице-премьерӗ тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ Татареску господин Союзниксен Контроль Комиссин председателӗн заместителӗ Сусайков генерал-полковник патне заявлени янӑ. Унта ҫапла каланӑ:

«Гитлерла Германие хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра пӗтӗм халӑхсен ирӗклӗхӗшӗн Румыни хӑйӗн вӑй-хӑватне хунине Совет Правительстви чаплӑн йышӑннине Румыни Правительствипе Румыни халӑхӗ хапӑл туса йышӑнаҫҫӗ. Ҫав ҫӗнӗ акт, Совет Правительстви пирӗн ҫӗршывӑн ырлӑхӗшӗн ӗлӗкрех тунӑ ӗҫсем ҫумне хутшӑнса, Совет Союзӗн Правительстви Румынин аслӑ интересӗсене шалти политика енӗпе те, тулашри политика енӗпе те йышӑннине пирӗн ҫӗршыва татах та тепӗр хут кӑтартса парать. Перемири ҫинчен тунӑ килӗшӗве эпир тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫа кӗртсе пынине Совет Союзӗн Правительстви тивӗҫлипе хакланине тата ку тӗлӗшпе тунӑ ӗҫсен результачӗ пысӑк пулнине пӗтӗм ҫӗршыв хавасланса палӑртать.

Пирӗн ҫӗршывсем хушшинче дипломатиллӗ сыхӑну пуҫланса кайнинче тата кун хыҫҫӑн пӗр-пӗрин патне Министрсем ярса панинче эпир тунӑ мӗнпур жертвӑсене Совет Правительстви йышӑннине тата ҫав вӑхӑтрах пирӗн халӑхсене сыхӑнтарса тӑракан туслӑх вӑйлӑланса пынине Румыни Правительствипе халӑхӗ курса тӑраҫҫӗ.

Совет Союзӗн Правительстви хӑйӗн решенине хӑвӑрт пурнӑҫа кӗртнин пӗлтерӗшне пирӗн халӑх тивӗҫлипех хаклама пултарӗ, тесе эпӗ татах тепӗр хут калатӑп. Паянхи пӗлтерӳрен тухса тӑракан сӗнӳсем тӗлӗшпе Совет Союзӗн Правительстви мӗнле пусарулӑх парассине пирӗн Правительство кӗтсе тӑрать».

Тырă вырса пуçтарас ĕçе кунĕн-çĕрĕн, çанталăк мĕнлине пăхмасăр туса пымалла

Ĕçлеме пултаракан кашни колхозникпа колхозница халĕ хирте пулмалла

Тырпул пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатар

Августăн 8-мĕшĕ тĕлне республикăра кĕрхи тырăсене пĕтĕмпе те 10.000 гектар ытларах кăна вырса пуçтарнă. Вăл шутран Елчĕк районĕнче 2.659 гектар, Чкаловски районра 1.297 гектар, Вăрнар районĕнче 800 гектара яхăн вырса кĕнĕ. Республикăри колхозсенчен çурри ытларах тырпула массăллăн пухса кĕме тытăнман та.

Йĕпреç районĕнчи колхозсем тырпул пухса кĕртес ĕçе çав тери вăрахăн та йĕркесĕр тытăнса пыраççĕ. Кунта 5 колхозра çеç тырă вырма пуçланă. Çавăн пекех Элĕк, Первомайски, Улатăр, Канаш, Кувакино, Сĕнтĕр, Çĕмĕрле, Комсомольски районсенче те тырпул пухса кĕртес ĕçе чăтма çук кая хăварса пыраççĕ. Ку районсенчи колхозсенче августăн 8-мĕшĕ тĕлне районĕпе те 30—80-шар гектар кăна вырса пухнă, мĕнпур колхозсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ кĕрхи тырăсене вырма вуçех те тытăнман. Пире корреспондентсем пĕлтернĕ тăрăх, Комсомольски районри хăшпĕр колхозсенче ыраш пиçсе çитсе тăкăнма та пуçланă. Çанталăк йĕпе-сапа тăни тата тăтăшах вăйлă çилсем пулни ыраша тăкас тата ларнă çĕртех пăсас хăрушлăх ытти районсенче те çывхарса килет.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе тытăнассине вăраха хăварнине Элĕк, Первомайски, Канаш, Кувакино, Сĕнтĕр, Çĕмĕрле, Комсомольски, Улатăр районĕсен руководителĕсем халĕ те çанталăк йĕпе-сапа тănипе ăнлантарса параççĕ, анчах тырпула йĕпе-сапа вăхăтĕнче пухса кĕртессине организацилес тĕлĕшпе хăйсем нимĕн те тумаççĕ. Çав лайăх çанталăк пуласса кĕтсе ларакан район руководителĕсен çакна астумалла: август уйăхĕнче лайăх уяр çанталăк пулассине кĕтме çук, апла пулин те парти Обкомĕпе Совнарком августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа кашни колхоз валлиех авăн çапмалли тата государствăна тырă памалли график палăртса хунă. Лайăх çанталăк пуласса кĕтсе ларнипе халĕ, август уйăхĕнче, тырпула пухса кĕмесен, вара пĕтĕм тырпул çухалать. Халĕ ыйту çапла тăрать: е халех, йĕпе-сапапа пăхмасăрах, тырпула пухса кĕртес те хĕлле тырăллă пулас, е тырра уйрах хăварас та хĕлле тырăсăр ларас. Вăрнар, Елчĕк, Чкаловски тата ытти хăшпĕр районсен руководителĕсем, малта пыракан нумай колхоз председателĕсем тырпула халех пухса кĕртме, тырă вырма юрăхлă кашни минутпа, кашни сехетпе туллин усă курма йышăнчĕç.

Пур колхозсен те çавăн пек тумалла.

Тырпул пухса кĕртес ĕç çакăн пек хăрушлăх умĕнче тăрать пулин те, хăшпĕр райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсем, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕсем тырпула йĕпе-сапа вăхăтĕнче пухса кĕртессине организацилес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Калинино, Канаш, Красноармейски, Первомайски, Йĕпреç районĕсенче ку тарана çитсе те кĕлте типĕтме 6—7 авăн çеç тунă. Çакна мĕнпе ăнлантарса памалла-ха? Çак районсен руководителĕсем тырпулшăн çунманнипе, тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн ответлăха туйманнипе çеç ăнлантарса пама пулать. Етĕрне районĕнче паянхи кун тĕлне 22 итем, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 37 итем, Вăрнар районĕнче 22 итем çеç туса хатĕрленĕ. Витнĕ итемсем кашни бригадăрах пулмалла. Çакăн пек çитменлĕхсемшĕн колхоз председателĕсен кăна мар, район руководителĕсен те ответ тытмалла.

Эпир кирек епле çанталăкра та тырпул пухса кĕртме пултаратпăр, пухса кĕртмелле те. Пирĕн колхозсен акмалли çĕр лаптăкĕ ытлашши пысăк мар, çавăнпа та эпир йĕпе-сапа вăхăтĕнче пухса кĕнĕ тырра та типĕтсе çапма пултаратпăр! Тырпула тăккалас мар тесен, пирĕн витнĕ итемсемпе, сарайсемпе, лупасайсемпе усă курмалла.

Парти райкомĕсемпе райисполкомсен халĕ мĕнпур парти, совет тата комсомол активне мобилизацилесе вĕсене колхозсене пулăшма яла ямалла.

Тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕмелле—çапла хушать пире Тăван çĕршыв, çапла хушать пире государство.

Ĕçе чăрмантаракан председатель

СĔНТĔР, августăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). «Краснофлотец» колхозăн кăçал 159 гектар тĕштырă пухса кĕртмелле. Колхозниксен пухăвĕ йышăннă тăрăх, çак ĕçе пĕтĕмпех икĕ эрне хушшинче тумалла. Колхозра 2 жнейка пур, çурлапа выракансем тата çавапа çулакансем 60 çын ытла шутланаççĕ. План тăрăх августăн 2-мĕшĕнчех суйласа вырма палăртнă. Анчах колхоз председателĕ Пайманов юлташшăн план та, колхозниксем йышăнни те нимех те мар пулас.

— Суйласа вырма пулнă ик-виç кун каяллах, анчах та тăтăшах çумăр çуни чăрмантарать,—тесе колхозниксене ĕçлеме кăлармасть. Паллă, çумăр тăтăшах çуса тăнă кунсем пĕрре те пулман. Августăн 7-мĕшĕнче çанталăк кунĕпех уяр тăчĕ, апла пулсан та, ыраш вырма пурĕ те 2—3 çын кăна тухнă. Паймановпа колхоз бригадирĕсем хире те тухса курман.

Колхоз тырă вырма пачах хатĕр мар. Жнейкăсене юсаман, мĕншĕн тесен Пайманов: эпир ыраша çурлапах вырса пĕтеретпĕр, тесе ларать. Паян колхозра ыраш вырма тухрĕç, анчах та колхозниксем пурте пĕрле вырма тытăннă, уйрăм сдельщина çинчен вĕсене ăнлантарса паман.

А. СОЛОВЬЕВ.

Нормăран ирттерсе

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, августăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Кашни кунах çумăр пулать пулсан та, чылай колхозниксем кулленхи нормăна ирттерсе тултараççĕ. «Новый путь» колхозра уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ. Çак колхозри Анастасия Алексеева пĕр кун çурă хушшинче çурлапа 0,25 гектар вырнă, кĕлтесене типĕтсе çĕмеле хывнă. Кунта çурлапа выракансем пурте тенĕ пекех кулленхи нормăна ирттерсе тултараççĕ. «Прогресс» колхозри вăтă колхозницă Евдокия Чавинкина çур кунра çурлапа 0,18 гектар вырнă. «Родина» колхозра Тепеев юлташ ертсе пыракан бригадăри кашни колхозникпа колхозница, уйрăм участокра ĕçлесе, хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ. Ĕнер çак бригада нормăна 205 процент тултарнă. Кунта çумăр çуман вăхăтра кăнтăрла та, çĕрле те выраççĕ.

Анчах та районра: тырă симĕс-ха, тесе ларакан колхозсем те пур-ха. «Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ Давыдов юлташ: ыраш симĕс-ха, тесе лăпланса ларнă, çавна пула çурласене шăллатман, çавасем хатĕрлемен, кĕлетсене тасатман.

П. ТИХОНОВ.

Ыраш вырса пĕтернĕ, государствăна тырă параççĕ

ВĂРНАР, августăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан ăмăртăва пуçарса яракансем хăйсем илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Районри пур колхозсенче те ыраш вырас ĕç массăллăн пуçланса кайрĕ. Кунта уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă кураççĕ. Çумăр иртнĕ хыççăнах вырма тытăнаççĕ, анчах вырсан типиччен кĕлте çыхмаççĕ. Вырнă ыраш типсенех, ăна кĕлтене çыхаççĕ, пĕчĕк çĕмелсем туса типĕтеççĕ. Уяр тăнă вăхăтра кунта колхозниксем апат çиме те ялла таврăнмаççĕ, хиртех апатланаççĕ. Ыраш вырас ĕçе çамрăксенчен пуçласа пурте, правленире ĕçлекенсемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем те хутшăнаççĕ. Кашни çынах уйрăм сдельщинăпа, хăйне уйăрса панă участокра ĕçлет.

Çапла ĕçлесе, «Победа» колхоз (председателĕ И. Андреев) 110 гектар, «Самолет», «Первое мая», Киров, Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем ыраша çуррине ытла вырнă. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз августăн 8-мĕшĕ тĕлне ыраш вырса пĕтерчĕ, малтанхи тырра çапса, государствăна пама ĕнерех Вăрнара хĕрлĕ обоз ячĕ.

Чапаев ячĕпе тăракан колхозра кулленхи нормăна тултарайман пĕр çын та çук. 60 çулхи Мария Хрусталева пĕр кун хушшинче çурлапа 0,33 гектар вырнă, çак колхозри вăтă колхозник Иван Быков кулленех 0,30 гектар вырнă. Нормăна икĕ хут ытла тултарса ĕçлекен Арбузова юлташ çапла калать:

— Кăçал çанталăк çумăрлă тăрать, уяр çанталăка кĕтсе тăрсан, тырă хиртех шăтма е тăканса пĕтме пултарать. Çавăнпа тырра вырнă чухне эпир кашни кунăн мар, кашни сехетшĕн кĕрешмелле.

Уравăшри «Первое мая» колхозра çурласемпе вырнă вăхăтрах, çавасемпе те çулаççĕ. Кунта та 90 гектар ытла вырса пухнă. Ĕç тухăçлăхĕ пур колхозсенче те пысăк.

Паян ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн уполномоченнăйĕсем тата ялти агитаторсем Японие хирĕç вăрçа тухасси çинчен хамăрăн правительство пĕлтернине колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Уяр çанталăка кĕтсе ларакансем

СĔНТĔРВĂРРИ, августăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 55 колхозран паянхи куна пурĕ те 25 колхоз кăна ыраш вырма тухнă; çак колхозсенче пурĕ те 99 гектар кăна вырнă. Малта пыракан «Октябрь», «Моряк», «Красный волгарь», «Красная звезда» колхозсем те 7 гектартан пуçласа 15 гектара çити кăна вырнă.

Ыраша пур колхозсенче те çурлапа выраççĕ. Нумай колхозсенче машинăсене юсаса та пĕтермен. Паянхи кун тĕлне 27 жнейка, 27 молотилка юсавсăр лараççĕ.

«Правда», «Ядро» колхозсем ыраш вырма тухман, вĕсем çанлах уяр çанталăк пуласса кĕтсе лараççĕ.

МТС та начар хатĕрленнĕ. Комбайнсене юсаса пĕтермен. Е. Кудряшов ĕçлекен комбайна государство комиссийĕ йышăннă, вăл тырă вырма «Красный волгарь» колхоза тухса кайнă. Колхоза çитсен, комбайна ял варрине пĕр хуралсăр лартса хăварнă та, унăн тĕрлĕ пĕчĕк пайĕсене ача-пăчасем илсе пĕтернĕ. Çавна пула ку комбайн та ĕçлеме пултараймасть.

Ф. ИЛЬИН, С. МЕРЧЕН.

Тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн

Шăхасан районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз уй-хирĕнче вăйлă тырпул çитĕнчĕ.—Эпир тăрăшса ĕçлени ахаль пулмарĕ. Суракине кĕске вăхăтра пысăк пахалăхпа ирттерни, калчасене çумкурăкĕнчен тăтăшах тасатса тăни вăйлă тырпул туса илме май пачĕ. Ĕçленĕсемĕн çапла ĕçлес килет. Тырпула пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр,—теççĕ колхозниксем.

Колхоз тырпул пухса кĕртме пур енчен те лайăх хатĕрленсе тытăнчĕ. Ялхуçалăх машинисем, транспорт инвентарĕ çитеклĕ.

Колхозниксем амбарсене дезинфекциленĕ, итемсене тасатнă. Михĕсемпе шăналăксем хатĕрлесе хунă. Тырă вырма тухнă хыççăн 5-мĕш кунĕнче авăн çапма тата государствăна тырă леçме тытăнаççĕ.

О. ВИНОГРАДОВА.

Сад-пахчасен переписçне ăнăçлă ирттерер

Колхозлă ялта сад-пахчасем ĕрчетме, вĕсене коллективлă хуçалăхшăн усăллă тума пур условисем те çитеклĕ.

Партипе Правительство сад-пахчасемпе çырла йывăççисем ĕрчетессине яланах пысăк вырăна хунă. Отечественнăй аслă вăрçăччен пирĕн республикăра сад-пахчасем ĕрчетес ĕç ăнăçлă пыратчĕ. Сад-пахчасен лаптăкĕ 1941 çулта 10.000 гектар ытла шутланнă. Колхозниксен, рабочисемпе служащисен кил вырăнĕсенче çимĕç йывăççисем чылай пысăк лаптăк йышăннă. Пирĕн колхозсем йывăç улми тата тĕрлĕ çырласем вуншар пин тонна пухса илнĕ, вĕсем хамăр республикăн тулашне те нумай кайнă. Пирĕн республикăра туса илекен йывăç улми тутлă та чăтăмлă пулнă.

Анчах та 1939—1942 çулсенче пулнă сивĕ çанталăк сад-пахчасене пысăк сиен курчĕ. Шăнса пĕтнĕ йывăççене çĕнĕрен çитĕнтересси, уйрăмăнах вăрçă пынă çулсенче йывăр пулчĕ. Çак йывăрлăхсене çĕнтерсе, пирĕн колхозсем вăрçă çулĕсенче 2000 гектар çинче сад-пахчасем ĕрчетрĕç. 100.000 тĕп ытла йывăç колхозниксен, рабочисемпе служащисен кил вырăнĕсене лартнă. Халĕ, вăрçă аслă Çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн, сад-пахчасем ĕрчетес енĕпе пиккенерех ĕçлеме пур условисем те çитеклĕ. Колхозлă пурнăç сад-пахчасене анлăн ĕрчетме ыйтать.

Сад-пахчасем ĕрчетни халăх хуçалăхĕнче ытла та пысăк вырăн йышăннине шута илсе, СССР Совнаркомĕ кăçал сад-пахчасен тата çырла йывăççисен пĕтĕм Союзри переписçне ирттерме йышăнчĕ.

Çак ĕç пĕтĕм çĕршывĕпех августăн 1-мĕшĕнче пуçланчĕ, ăна пĕр уйăхра вĕçлемелле. Çак уйăхра çĕршыври мĕн пур сад-пахчасене, çырла йывăççисене шута илсе тухмалла. Сад-пахчасемпе çырла йывăççисене кашни колхозра, совхозра, подсобнăй хуçалăхсенче, кооперативлă хуçалăхсенче кăна мар, уйрăм хуçалăхсен, колхозниксен, рабочисемпе служащисен йывăççисене те шута илмелле. Халĕ ирттерекен перепись сад-пахчасен лаптăкне, йывăççен сортне, вăл йывăççем миçе çултине лайăх кăтартса памалла. Çакă вара малалла сад-пахчасем ĕрчетес ĕçе план тăрăх туса пыма май парать.

СССР Совнаркомĕ çак переписçе ирттерме СССР Госпланĕн Статистика Управленине, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата СССР Апат-çимĕç Халăх Комиссариатне хушрĕ. Переписçе кĕске вăхăтра, пĕр уйăх хушшинче, ирттермелле туни пирĕн ответлăха ӳстерет. Статистика Управленийĕн, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн тата Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕн органĕсем оперативнă ĕçлемелле. Парти, совет органĕсем вĕсене кулленех пулăшса пымалла. Райисполкомсемпе парти райкомĕсем перепись мĕнле пыни çинчен хăйсен ларăвĕсенче сӳтсе-явмалла. Чăн малтанах, перепись тăвакансен составне, перепись планне пăхса тухмалла. Перепись тăвакансем хушшинче, ялхуçалăх специалисчĕсемпе пĕрле, парти тата совет активĕ те пулмалла. Августăн 20-мĕшĕ тĕлне переписçе вĕçлемелле. Переписçе кирлĕ пек туниие тĕрĕслес ĕçе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле.

Переписçе тĕрĕс тунипе тата контроллĕ ĕççене вăхăтра ирттернипе пĕрлех, райисполкомсемпе горсовет исполкомĕсен сентябрĕн 15-мĕшĕччен сад-пахчасем малалла ĕрчетсе пымалли план тумалла. Вăл план тăрăх хăш колхозра е совхозра сад-пахчасем тăвассине палăртмалла.

Перепись пирĕн республикăри сад-пахчасем тата çырла йывăççисем мĕнлине пăхса тухмалли смотр, сад-пахча ĕрчетес тĕлĕшпе малашне мĕнле ĕçлемеллине кăтартса паракан смотр пулса тăмалла.

Г. ГОРБАТЕНКО,
СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ.

Совет Правительстви Японие хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтерни пирки ют çĕршывсенче мĕн калаççĕ

ЛОНДОН, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Трумэн президент паян кăнтăрла иртсен Совет Союзĕ Японие хирĕç вăрçа тухни çинчен пĕлтернĕ. Хаçатсене çав факт çинчен Трумэн заявлени тăваччен 14 минут маларах кăна пĕлтернĕ. Çав пĕлтерӳ çисĕм пек хăвăрт сарăлнă. Сенатри ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн председателĕ Коннэли хыттăн çапла каланă: «Тав турра, вăрçă пĕтнĕпе пĕрех ĕнтĕ», тенĕ.

ЛОНДОН, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 9-мĕшĕнчен пуçласа Совет Союзĕ Японие хирĕç вăрçа тухать, тесе Совет Правительстви пĕлтерни пирки Лондонри радио çапла каланă: чылай вăхăт хушши ĕнтĕ Россия Японие хирĕç вăрçа тухма пултарать тесе шутлатчĕç. Анчах çак тĕлĕшпе официальнăй йĕркепе каланă пĕртен-пĕр япала вăл виçĕ державăн Берлинри конференцин решенийĕсенчи пĕр параграфран çеç паллă пулчĕ. Çав параграфра конференци вăхăтĕнче виçĕ правительствăн штаб начальникĕсем пурне те тивекен çар ыйтăвĕсем тăрăх канашлани çинчен пĕлтернĕччĕ. Совет Правительстви, тенĕ Лондонри радио, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче яланах пысăк вăйсем тытса тăнă. Японецсен те Манчжурире пысăк вăйсем пурри паллă.

ПАРИЖ, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: тĕнчери хирĕçӳсен юлашки сехечĕ çапрĕ. Совет Союзĕ тин çеç Японие хирĕç вăрçа тухни çинчен пĕлтерчĕ. Совет Правительстви тунă заявлени çинчен каласа, Парижри радио малалла çапла пĕлтернĕ: союзниксемшĕн çав тери паха пĕрлĕх тĕнчен пур кĕтесĕсенче те палăрать. Çав пĕрлĕх халĕ нихăçанхинчен те çирĕпрех. Союзниксем хушшинче хирĕçӳсем кăларма хăтланнă «пиллĕкмĕш колоннăн» шанчăкĕсем путланса ларчĕç. Совет правительстви çав решенипе вăрçă пĕтессине çывхартать кăна мар, çакăнпа пĕрлех вăл союзниксем малалла та пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетсе парать. Çавăн пек пĕрлешсе ĕçлени вăл мирĕн çирĕп шанчăкĕ пулса тăрать, халăхсене инкек-синкекрен сыхлать тата вĕсен ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртме май парать.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕ Японие хирĕç вăрçа тухни çинчен Шурă Çурт пĕлтернĕ хыççăн темиçе минутранах Америка радиостанцийĕсем хăйсен яланхи программисене пăрахса та, çав событи çинчен пĕлтерме тытăннă. Хăйсен пирвайхи сăмахĕнче обозревательсем Совет Союзĕ йышăннă решение саламланă. Кингдон радиокомментатор каланă тăрăх, Совет Союзĕ йышăннă решени Японие хирĕç пыракан вăрçă хăвăрт вĕçленессине пĕлтерет. Совет Правительстви тунă заявлени Японие юлашки хут татăклăн пырса çапни пулса тăрать. Тăватă аслă держава вăрçă вăхăтĕнче туслăн ĕçлени, тенĕ вăл, мир вăхăтĕнче те çаплах юлмалла. Совет Союзĕ Японие хирĕç вăрçа хутшăнни вăрçă вăхăтне чакарать тата хăвăрт çĕнтерес шанчăка çирĕплетет. «Эпир Совет Союзне — Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи çĕнĕ союзнике, Лăпкă океан çинче çывăх вăхăтрах мир пуласси çинчен пĕлтерекене саламлатпăр».

Кернан радиокомментатор çапла каланă: Совет Союзĕ Японие хирĕç вăрçа тухни, паллах, вăрçă вăхăтне кĕскетет тата Японие хирĕç йышăннă мерăсенчен чи аслă та татăклă мера пулса тăрать. Çакă вăл Япони нумай вăхăт хушши хирĕç тăма пултарас çуккине пĕлтерет.

Европăри тĕнĕл держависен чи паллă вăрçă преступникĕсене суд тума тĕнчери халăхсен çар трибуналне туса хуни

Юлашки вăхăтра Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Франци республикин представителĕсем Лондонра Европăри тĕнĕл держависен чи паллă преступникĕсенĕн судра тĕпчесе тухса айăпласси çинчен канашлусем туса ирттернĕ. Çав канашлусем халĕ кирлĕ ыйтусем тăрăх пĕтĕмĕшпех каласса татăлнипе вĕçленнĕ.

Канашлусенче çаксем пулнă: Совет Союзĕ енчен—СССР Верховный Суд Председателĕн Заместителĕ И. П. Никитченко тата А. Н. Трайнин профессор; Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем енчен—Верховный Суд членĕ Роберт Джексон; Пĕрлешӳллĕ Королевство енчен—лорд-канцлер барон Джоуитт, сэр Давид Максуэл Файф, Томас Барнс, Г. Д. Робертс тата Р. А. Клайд; Франци республики енчен—кассаци сучĕн членĕ Роберт Фалько тата А. Грон профессор.

Юнкун, августăн 8-мĕшĕнче, çав калаçусем хыççăн 4 держава представителĕсем килĕшӳ туса алă пуснă. Çав килĕшӳ тăрăх, Европăри тĕнĕл держависен чи паллă вăрçă преступникĕсене суд тума тĕнчери халăхсен çар трибуналне туса хумалла. Килĕшӳ çумне çав трибунала организацилемелли йĕркене тата унăн ĕçĕсен принципĕсене кăтартса паракан устава хушса хунă.

АНГЛИ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ МУСКАВРАН ТУХСА КАЙНИ

Англин тимĕрпе хурçă шăратакан промышленноçĕнчи рабочийĕсен делегацийĕ, Совет Союзĕнче хăна пулса курса çӳресессĕн, августăн 7-мĕшĕнче Великобритание тухса кайнă. Çав делегаци Совет Союзне хура металлургире ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕ чĕннипе килнĕ. Делегаци Мускаври, Магнитогорскри, Запорожьери шутлăра предприятисенче, шкулсенче, ача садĕсенче, культурăпа йăла учрежденийĕсенче пулнă.

Делегаци Совет Союзĕнче виçĕ эрне ытла пурăннă, совет профсоюзĕсен ĕç йĕркипе, Ленинградри металлурги комбинатĕнчи, «Серп и Молот» заводри тата ытти предприятисенчи завод тата цех комитечĕсен ĕçĕсемпе паллашнă.

Делегаци членĕсем Мускавран тухса каяс умĕн çапла каланă: Совет Союзĕнчи профсоюзсемпе Англири профсоюзсем пĕр-пĕрипе таччăн килĕштерсе ĕçлесе пыни йывăр çухатусем тӳснĕ хыççăн тунă килĕшĕве вăйлатса пырĕ, ирĕклĕхе юратакан халăхсен союзне çирĕплетĕ, тенĕ.

Аэродромра делегацие çаксем ăсатса янă: Хура металлурги рабочийĕсен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕ Евстратов юлташ, «Серп и Молот» заводри завком председателĕ Пономарев юлташ, ВЦСПС-ăн ют çĕршыв ĕçĕсен отделĕн заведующийĕ Кузнецов юлташ тата ВЦСПС-ăн ответлă работникĕсем. (ТАСС).

БОЛГАРИРЕ ХАЛĂХ ПУХУНЕ СУЙЛАС УМĔН

СОФИЯ, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер пĕтĕм çĕршывĕпех Отечественнăй фронта кĕрекен партисем организациленипе суйлав умĕнхи нумай йышлă пухусемпе митингсем пулса иртнĕ. Хуласемпе ялсенчи халăх, хальхи халăх влаçĕн çитĕнĕвĕсене палăртса, Отечественнăй фронтăн малашнехи ĕçĕсем çинчен калакан ораторсене саламланă.

Пухусенче йышăннă резолюцисенче Отечественнăй фронт политикине ырланă, реакционерсемпе раскольниксен ĕçĕсене сивленĕ.

ФИРЛИНГЕР РАДИОПА ТУХСА КАЛАНИ

ПРАГА, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 4-мĕшĕнче Чехословаки премьер-министрĕ Фирлингер иртнĕ эрнере правительство йышăннă решенисем çинчен радиопа сăмах тухса каланă.

Премьер-министр каланă тăрăх, халăх пуххине çак çулăн вĕçĕнче пухмалла. Вăл пухура чех халăхĕн анлă сийĕсем тата словак депутачĕсем пулмалла. Чехсемпе словаксем малашне тăванла пĕрлешсе ăнăçлă ĕçлессине хытă шанса тăратăп, тенĕ Фирлингер. Германин çар хăватне яланлăхах пĕтерсе тăкнă, нацистла организацисем сăтăрла вăрттăн ĕçсем тунине союзниксем пĕрлешсе ĕçленине пула чарса лартатпăр. Нимĕçсен вăрттăн ĕçлекен организацийĕсем çине сӳрĕккĕн пăхса тăмалла мар. Хамăрăн напиллĕ интерессене хӳтĕленĕ çĕрте пирĕн пит хытă пулмалла.

Нимĕççене Чехословакирен кăларса ярассине виçĕ аслă держава çирĕплетнине палăртса, Фирлингер çапла каланă: Чехословакин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви нимĕççене Чехословаки территорийĕнчен кăларса ямалли плана туса хатĕрлет. Çав плана ятарласа уйăрнă делегаци Берлина Союзниксен Контроль Советне илсе каять. Фирлингер каланă тăрăх, тырпул кăçал пур çĕрте те питĕ лайăх пулнă. Хальхи вăхăтра ăнăçлăн тырă выраççĕ тата авăн çапаççĕ. Ку вăл чехсен ĕçри пысăк çĕнтерĕвĕ пулать.

Ĕç сыхлавĕпе социальнăй обеспечени министерстви, тенĕ малалла Фирлингер, правительство ячĕпе распоряжени кăларма хатĕрленет. Çав распоряжени тăрăх ĕççĕр çынсен пурин те ĕçе вырнаçас шутпа наци комитечĕсене е ĕç сыхлавĕн округри учрежденийĕсене пымалла.

Чехословакин тĕнчери лару-тăрăвĕ çирĕпленнине палăртса, Фирлингер юлашкинчен çапла каланă: «Ман шутпала, хамăрăн тулашри тата шалти лару-тăрупа эпир кăмăллă пулмалла. Правительство политикăллă 4 партипе тата президентпа пĕрлешсе ĕçлет».

СОВЕТ ГРАЖДАНĔСЕН ДАНИРИ ПОЛОЖЕНИЙĔ ПИРКИ

КОПЕНГАГЕН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Копенгагенран инçех мар Ягресприс местечкăра совет гражданĕсен лагерĕ пур. Ку лагерьте гитлеровецсем чуралăха Германие хăваласа килнĕ совет гражданĕсем пурăнаççĕ.

Лагерь Дани çарĕн казармисенче вырнаçнă, унта арçынсем, хĕрарăмсемпе ача-пăчасем 6.000 çынна яхăн пурăнаççĕ.

1945 çулхи февралĕн 11-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тăрăх, çавăн пек çынсене вĕсем пурăнакан çĕршыва оккупациленĕ çар командованийĕн пăхса усрамалла, анчах союзниксен Данири çарĕсем те асăннă совет гражданĕсене тумлантармаççĕ. Вĕсенчен 50 процентне яхăн кĕпе-тумтирсĕр. Союзниксен çар командованийĕ çав совет гражданĕсене тытса усрассине Данири «Хĕрлĕ Хĕрес» аллине панă. Ку общество вĕсене пăхса усрас тĕлĕшпе тăрăшать пулин те, килĕшӳре палăртнă чухлĕ апат-çимĕç параймасть. Лагерьте совет гражданĕсем хушшинче, вĕсен Тăван çĕршыва таврăнас кăмăлне пăсас тесе, тăтăшах совета хирĕçле пропаганда тăваççĕ. Анчах та пур совет гражданĕсем те хăвăртрах киле таврăнасшăн.

АЛБАНИРИ ХАЛĂХ ФРОНЧĔН СЪЕЗЧĔ

БЕЛГРАД, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 5-мĕшĕнче Тирана хулинчи «Китяво» театрĕн çуртĕнче халăх фрончĕн съезчĕ уçăлнă. Съезда Мишани доктор сăмах каласа уçнă. Съезда 500 делегат пынă.

Съезда саламласа Энвер-Ходжа генерал-полковник сăмах тухса каланă.

ЧЕХОСЛОВАКИ ПАЛАЧНĔ КАРЛ ФРАНКА ПРАГА ХУЛИНЕ ИЛСЕ ПЫНĂ

ПРАГА, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Прагăри радио çапла пĕлтерет: августăн 7-мĕшĕнче Прага хулине самолетпа «Чехипе Моравипротекторачĕ» тĕлĕшпе ĕçленĕ гитлерла импери министрне Карл Герман Франка илсе пынă. «Чехипе Моравипротекторачĕ» тесе гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ чехсен çĕршывне каланă.

НОРВЕГИ ПИСАТЕЛĔ ФАНГЕН КАЛАНИ

СТОКГОЛЬМ, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Норвеги писателĕ Фанген çак кунсенче Норвеги хаçачĕсен представителĕсене çапла каланă: Норвегин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Кот 1941 çулхи март уйăхĕнчех нимĕçсем Норвегие тапăнса кĕрес плансем çинчен пĕлсе тăнă. Çавăн çинчен вăл Рютие тата Данипе Швецин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсене пĕлтернĕ.

Çак хыпар Швецире питĕ тĕлĕнтернĕ. «Афтонбладет» хаçат ку ыйту пирки ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса ĕçленĕ Гюнтертан ыйтнă. Лешĕ çапла каланă: «Ку ыйтупа эпĕ нимĕн те каласшăн мар. Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинчен ыйтăр, тен вăл каласа парĕ», тенĕ.

Çакăн хыççăн «Афтонбладет» хаçат ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин пичет отделĕнчен ыйтнă. Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви ку ыйтăва тĕпчесе тухать, тесе ответленĕ унта. Тĕпчев ĕçĕсем вĕçленсе çитмен пирки, ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви ку ыйтупа калама пултараймасть.

ТРУМЭН США-на ТАВРĂННИ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Трумэн Нью-Порта крейсерпа пынă, унтан вăл Вашингтона тухса кайнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Завода çакăн пек рабочисем, инженерсемпе техниксем кирлĕ

Инженерсемпе техниксем: металла сивĕлле ĕçлекен электриксем, конструкторсем, литейщиксем, химиксем, лаборантсем; **администраципе хуçалăх работникĕсем**: снабженецсем, кладовщиксем; **шут работникĕсем**: бухгалтерсем, счетоводсем, табельщиксем, нарядчиксем, юсакан мастерсем, пухакан мастерсем, инструмент мастерĕсем, штамплакан мастерсем, вĕрилле преслакан мастерсем, токарьсен ĕçĕн мастерĕсем, автомеханиксем, тĕрĕс приборсен механикĕсем.

Рабочисем: токарьсем, револьверщиксем, автоматчиксем, фрезеровщиксем, штамповщиксем, слесарьсем, инструментальщиксем, лекальщиксем, юсакан слесарьсем, пухакан слесарьсем, автослесарьсем, шоферсем, формовщиксем, заливщиксем, модельщиксем, чугун çул çинчи транспорт рабочийĕсем; **строительство рабочийĕсем**: каменщиксем, бетонщиксем, арматурщиксем, плотниксем, столярсем, малярсем тата ыттисем те.

Электромонтерсем: обмотчиксем, намотчиксем, связистсем, радистсем, телефонистсем, электросварщиксем; лавççисем, конюхсем, тимĕрçĕсем, шорниксем, подсобнăй рабочисем, уборщицăсем, дворниксем. çуртсемпе общежитисен коменданчĕсем; **обществăллă апатланассин работникĕсем**: поварсем, официантсем, кухньăри рабочисем. Çĕрпӳ хули çывăхĕнче заводăн подсобнăй хуçалăхĕнче ĕçлеме ялхуçалăх работникĕсем.

Çартан таврăнакан çынсене çарта илнĕ профессисем тăрăх квалификаци ӳстерме завод производство вĕрентĕвне организациленĕ.

Вĕрентессе кунта тĕп ĕçрен хăтармасăр вĕрентеççĕ, вĕренекенсем ĕçукçи илеççĕ тата вĕсене уйрăм списокри рабочисемпе пĕртан снабжени параççĕ.

Завод çакăн пек профессиллĕ рабочисем вĕрентсе хатĕрлет: токарьсем, револьверщиксем, автоматчиксем, фрезеровщиксем, строгальщиксем, слесарь-инструментальщиксем, юсакан слесарьсем, автослесарьсем, шоферсем, электромонтерсем, связистсем, телефонистсем, пухакан слесарьсем, механиксем, сехет мастерĕсем, модельщиксем, формовщиксем, заливщиксем, прессовщиксем; **строительство рабочийĕсем**: каменщиксем, плотниксем, столярсем, штукатурсем, малярсем; **шут работникĕсем**: бухгалтерсем, счетоводсем, табельщиксем, нарядчиксем.

Конструкторсемпе лаборантсем хатĕрлекен курса çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. Вĕреннĕ вăхăтра вĕсене уйăхне 300—400 тенкĕ стипенди параççĕ. Уйрăм списокри рабочисемпе пĕртан снабжени параççĕ.

Çавăн пекех тата завод хуралне вахтерсем тата пушар командинче ĕçлеме работниксем кирлĕ.

Общежити параççĕ.

Районсенчен килекенсене завод чугун çулпа тата шыв çулĕпе килме тухнă тăкака саплать.

Заводра электромеханика техникумĕ тата çамрăк рабочисен шкулĕ пур. Кунта ĕçлеме пăрахмасăрах техникăллă вăтам шкултан вĕренсе тухма тата 10 çул вĕренмелли вăтам шкултан вĕренсе тухма пулать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Карла Маркса, 80. Бюро пропусков. Çырусене çак адреспа ямалла: гор Чебоксары, п/я 24, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—33, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00205 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000